28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ИЮЛЬ 25 ЮНКУН 142(6893) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Кашни колхозăн выльăх апачĕ çителĕклĕ пултăр

Ялхуçалăхĕнче халĕ чи хĕрӳллĕ тапхăр пуçланчĕ. Кашни кун, кашни сехет халĕ питĕ хаклă; кашни кун, кашни сехет халĕ пирĕн колхозсен килес çулхи кунçулне, вĕсен ĕçĕн ăнăçлăхне нумай енчен татса парать. Государство умĕнчи обязательствăсене тултарасси, колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх мĕн чухлĕ тырпул илесси, колхозсемпе колхозниксен выльăх-чĕрлĕхĕ тĕрĕс-тĕкĕл пуласси, çапла вара пирĕн пĕтĕм çĕршывăн вăй-хăвачĕ маларах çирĕпленесси те эпир халĕ тимлĕн, вăй шеллемесĕр, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленинчен килет.

Ĕçĕ вара халĕ колхозсенче калама çук нумай. Техникăллă культурăсемпе пахчаçимĕçсене çумласа тасатмалла тата ретсем хушшине купаласа пĕтермелле, çĕртме тăвас ĕçе вĕçлемелле, тырпулсене пухса кĕме хатĕрленмелле, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тумалла. Кунсăр пуçне, хальхи чи пысăк ĕçсенчен пĕри вăл—выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлесси пулса тăрать.

Республика кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те тултарчĕ. Ку ĕнтĕ—чылаях пысăк çитĕнӳ. Анчах çамрăк выльăхсене пурне те тимлĕн сыхласа усрамасан, выльăхсене хĕлле çитерме апат çителĕклĕ хатĕрлесе хумасан, пирĕн çак малтанхи çитĕнӳ ахалех пĕтсе ларма пултарать. Çавăнпа та, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе республика тунă малтанхи çитĕнĕве çирĕплетсе хăварас тесе, выльăх апачĕ ытлашшипех хатĕрлесе хурассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

Çак тĕлĕшпе вара утă çулса пухса кĕртес ĕç чылаях пысăк вырăн йышăнать. Утă вăл—выльăхшăн, уйрăмах лашасемшĕн, нимĕнпе улăштарма çук апат пулса тăрать. Апла пулсан, ăна вăхăтра та лайăх пухса кĕртес тесе, пирĕн пур майсемпе те тăрăшмалла. Çакна вара чылай районсенче асра тытмаççĕ. Сăмахран, июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне Элĕк районĕ çаран утине мĕнпурĕ те 46,7 процент чухлĕ кăна çулса пухса илнĕ. Çавăн пекех Çĕрпӳ, Сĕнтĕр, Улатăр, Çĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенче те утă çулас ĕç пите вăраха юлса пырать. Вĕсем утă çулмалли плана пĕтĕмпе те 70 процента çитиччен кăна тултарнă.

Утă çулас ĕçе кая хăварса пыракан районсемпе колхозсем пысăк сиен курасçĕ. Пĕр енчен, вăхăтра çулман пирки утă пахалăхĕ чакать, вăл нумай таккаланса пĕтет; тепĕр енчен, государствăна утă парас ĕçре çĕнĕ йывăрлăхсем тухса тăраççĕ, çакă вара ытти ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пымашкăн чăрмалтарма пултарать. Кун пек ан пултăр тесен, пирĕн колхозсен выльăх апачĕ çителĕклĕ те пахалăхлă пултăр тесен, утă пухас ĕçе кал-кал та вăхăтра туни кирлĕ. Малта пыракан районсем çапла тăваççĕ те. Шăхасан, Чурачăк, Йĕпрес, Красноармейски районсенчи колхозсем утă çулса пĕтернĕ ĕнтĕ. Вĕсем халĕ государствăна утă памалли плана çак кунсенчех тултарас тата колхоз валли юлнă утта капана хывса лартас тесе хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ.

Мĕншĕн-ха ытти районсенче те çавăн пек ĕçлемелле мар? Мĕн чăрмантарать утă çулса пухас ĕçе вăхăтра туса пыма? Çанталăк начар тăрать тесе ӳпкелешме кăçал майсем çук—вăл уяр та лăпкă тăрать. Утă çулса пухас ĕçе вăхăтра туса ирттерме пирĕн колхозсен пур майсем те çителĕклĕ. Чылай районсемпе колхозсен халĕ те утă пухса кĕртсе пĕтермен пулсан, вăл вара майсем пулманнинчен мар, çав колхозсенче партипе правительство решенийĕсене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пынинчен, ĕçе организацилеме пĕлменнинчен килет. Пур-ха пирĕн хăшпĕр çĕрте лăпкă та тӳлек пурнăçпа пурăнма юратакан юлташсем. «Вăрçă пĕтрĕ, мирлĕ самана пуçланчĕ. Ăçта васкас халĕ пирĕн? Тăшман хăратса тăмасть ĕнтĕ текех», теççĕ çав юлташсем. Анчах халĕ хамăрăн Тăван çĕршыв вăй-хăватне нихăçанхи пек мар ӳстерме кирли çинчен манаççĕ вĕсем. Çавăнпа вара ĕçе юлхаврах туса пыма тытăнаççĕ. Çакăнтан килмест-и-ха ĕнтĕ Элĕкпе Сĕнтĕр районĕсем утă çулас ĕçре юлса пыни? Вĕсем пĕлтĕр ку вăхăт тĕлне утă çулса пĕтернĕ пулсан, кăçал вара 46—57 процент кăна çулнă пулсан, çакă ĕнтĕ мĕн çинчен калатăр-ха? Выльăх апачĕ çителĕклĕ пултăр тесен, çак районсенче утă çулса пухас ĕçĕн хăвăртлăхне тĕпренех ӳстермелле. Ку тĕлĕшпе, чи малтан, районсенчи çĕрĕç пайĕсен хăйсен ĕçне нумай лайăхлатмалла.

Халĕ пирĕн килес çул ытларах утă çулса илесси çинчен те шухăшламалла. Ку вăл—кăçал курăк вăрлăхĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хумаллине пĕлтерет. Вăрлăх участокĕсем уйăрса хăварас ĕç, çапах та, республикăра çителĕксĕр пулса пырать-ха. Хăшпĕр районсенче курăк вăрлăхĕ туса илес тесе тăрăшма та шутламаççĕ иккен. Муркаш районĕн вăрлăх участокĕсем 360 гектар уйăрса хăвармалла. Вĕсем 180 гектар уйăрнă та лăпланса ларнă. «Пирĕн курăксем начар ӳснĕ, вăрлăх участокĕ урăх уйăрма пултараймастпăр эпир», теççĕ район руководителĕсем. Çапла вара плана тултарассишĕн кĕрешме те шутламаççĕ. Çакăн пек йăнăш йăлана татăклăнах пĕтерес пулать. Курăк вăрлăхне кашни колхозах, кашни районах хăйне кирлĕ чухлĕ туса илмелле.

Выльăх валли чи лайăх та йӳнĕ апатсенчен пĕри вăл—силос пулса тăрать. Ахальтен мар партипе правительство силос хывас ĕçе пысăка хурса хаклаççĕ.

Çапах та кăçал пирĕн республикăра силос хывас ĕç çителĕклĕ пулса пырать тесе калама пултараймастпăр-ха. Пачах та урăхла, вăл ĕç çав тери вăраххăн пырать. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне силос хывмалли плана пĕр Сĕнтĕрвăрри районĕ кăна тултарнă. Республикăри районсем нумайĕшĕ плана халĕ çуррине те тултарайман-ха. Шăхасан, Канаш, Вăрнар, Çĕрпӳ, Ишлей, Калинино, Çĕмĕрле, Чкаловски тата Кувакино районĕсенчи çĕрĕç пайĕсем вара хăйсен районĕсенчи колхозсем мĕн чухлĕ силос хывнине те пĕлмеççĕ.

Партипе правительство кăтартса панă тăрăх, силос хывас ĕçе тырпул пухса кĕме тытăниччен вĕçлемелле. Çавăнпа та ку ĕç халĕ хĕрӳллĕн пулса пыма тивĕçлĕ. Анчах çакна курма çук-ха. Сăмахран, июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне силос хывмалли плана Хĕрлĕ Чутай районĕнче 6,2 процент, Йĕпреç районĕнче 12,9 процент, Советски районра 24,8 процент тултарнă пулнă. Çак цифрăсем июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне нимĕн чухлĕ те улшăнман, çапла вара ку районсенчи колхозсем пилĕк кун хушшинче пĕр тонна та силос хывман.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн, выльăх валли çителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн чи малтан колхоз правленийĕсемпе ялти комсомол организацийĕсен кĕрешес пулать. Апла пулин те, ялти комсомолецсем халĕ силос хывас ĕçе çителĕксĕр хутшăнаççĕ-ха. ВЛКСМ райкомĕсемпе пуçламĕш организацисен секретарĕсем ку ĕçе тивĕçлипе пуçарса ертсе пымаççĕ.

Утă çулас, силос хывас тата выльăх валли витаминлă апатсем хатĕрлес ĕçĕн вăхăчĕ иртсе пырать. Халĕ ку ĕçĕн хăвăртлăхĕсене темиçе хут ӳстерни кирлĕ. Çак паха мероприятисене кирек мĕнле пулсан та кашни колхозпа район тултармалла. Çавăнпа та колхоз правленийĕсен утă çулас тата силос хывас ĕçе тума халĕ ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те çителĕклĕ чухлех уйăрса памалла. Государство панă плана пĕр сăмахсăрах тултармалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ТОРФ ПРОМЫШЛЕННОÇĔНЧИ ИВАНОВĂРИ ГОСУДАРСТВО ТРЕСЧĔН РАБОЧИЙĔСЕНЕ, ЧĂВАШ АССР-ĕнчен КАЙНĂСКЕРСЕНЕ, ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕПЛĔ ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР 25 çул тултарнă ятпа торф промышленноçĕнчи Ивановăри Государство тресчĕн уйрăмах палăрнă çак рабочийĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Мария Архиповна **Антоновăна** — Марково Сборное торфопредприятинчи бригадира.
2. София Пантелеевна **Артемьевăна** — Октябрьски торфопредприятинчи торф кăларакансен бригадирне.
3. Анастасия Семеновна **Виноградовăна** —Комсомольскри транспорт управленийĕнчи çул хывакана.
4. Марфа Егоровна **Егоровăна**—2-мĕш Тейковски торфопредприятинчи торф кăларакана.
5. Таисия Васильевна **Колесниковăна**—Октябрьски торфопредприятинчи торф кăларакансен бригадирне.
6. Елена Григорьевна **Лаптевăна**—Комсомольскри транспорт управленийĕнчи çул хывакана.
7. Нина Марковна **Марковăна**—Марково Сборное торфопредприятинчи рабочие.
8. Мария Моисеевна **Моисеевăна** — 2-мĕш Тейковски торфопредприятинчи торф кăларакана.
9. Анна Павловна **Матроскинăна**—Октябрьски торфопредприятинчи торф кăларакансен бригадирне.
10. Нина Егоровна **Никитинăна**—Марково Сборное торфопредприятинчи бригадира.
11. Пелагея Никитична **Никитинăна**—Комсомольскри транспорт управленийĕнчи магистраль çулĕсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен работницăна.
12. Нина Петровна **Петровăна**—Комсомольскри транспорт управленийĕнчи вăрман касакана.
13. Феврония Федоровна **Поповăна** — Комсомольскри транспорт управленийĕнчи вăрман касакансен бригадирне.
14. Мария Никифоровна **Сидоровăна**—Марково Сборное торфопредприятинчи бригадира.
15. Екатерина Антоновна **Сорокинăна** —Октябрьски торфопредприятинчи торф кăларакансен бригадирне.
16. Перасковия Яковлевна **Сорокинăна**—Комсомольскри транспорт управленийĕнчи çул хывакана.
17. Александра Борисовна **Тойгильдинăна**—Комсомольскри торфопредприятинчи работницăна.
18. Мария Николаевна **Яковлевăна** — Октябрьски торфопредприятинчи торф кăларакансен бригадирне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи июлĕн 8-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138, 139 тата 141-мĕш номерĕсенче.

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

3. Нина Алексеевна **Верахинăна** — «Портной» артельри производство заведующине.
4. Анна Кузьминична **Лебедевăна** — Судоверфь заводĕнчи болтсем касакана.
5. Александр Иванович **Петрова** — ВКП(б) райкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.
6. Василий Тимофеевич **Подъяльникова** —Центрти статистика Управленийĕн районри инспекторне.
7. Андрей Степанович **Спиридонова** — райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
8. Лидия Ивановна **Терентьевăна** — районри библиотека заведующине.
9. Евдокия Петровна **Сергеевăна** — районри сывлăх пайĕн заведующине.
10. Алексей Филаретович **Харитонова**— Судоверфь заводĕнчи тимĕрçе.
11. Мирон Васильевич **Ядрова** — «Пищевик» колхоз председательне.

МУРКАШ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Яков Григорьевич **Баранова**— «Восток» колхоз бригадирне.
2. Сергей Васильевич **Васильева** — Маленков ячĕпе тăракан колхоз председательне.
3. Максим Иванович **Вязова** — «Крестьянин» колхоз председательне.
4. Иван Герасимович **Герасимова** — «Совет» колхозри ферма заведующине.
5. Матвей Григорьевич **Григорьева** — районри сутĕç пайĕн заведующине.
6. Иван Осипович **Осипова** — Жданов ячĕпе тăракан колхоз председательне.
7. Сергей Иванович **Соловьева** — «Красное Сормово» колхозри ферма заведующине.
8. Порфирий Степанович **Степанова** — Наркомзагăн районри уполномоченнăйĕн агентне.
9. Семен Трофимович **Трофимова** — районри çĕрĕç пайĕн старши çĕр висекене.

ОКТЯБРЬСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

1. Василий Абрамович **Абрамова**— Каранъялĕнчи çыхăну отделенийĕн начальникне.
2. Герасим Дмитриевич **Дмитриева** — «Волгарь» колхоз бригадирне.
3. Владимир Егорович **Егорова**—районри финанс пайĕн заведующине.
4. Сергей Егорович **Егорова**—МТС-ри старши тракториста.
5. Евдокия Кузьминична **Кузьминана** —Ентри Пасарĕнчи колхоз председательне.
6. Тимофей Семенович **Мотнова**— «Большое Аккозино» колхозри хăмла çитĕнтерекен бригадăн бригадирне.
7. Римма Николаевна **Николаевăна**— «Труд» артельри комсомолецсемпе çамрăксен бригадин бригадирне.
8. Анисия Степановна **Степановăна**— Каранъялĕнчи «Труд» артельри тир тăвакан работницăна.
9. Ксения Трофимовна **Трофимовăна** — Вăрман Кăшкари Винокуров ячĕпе тăракан колхозри кайăк-кĕшĕк пăхакана.
10. Матрена Ивановна **Шиляеровăна**— Услă Пукашри Сталин ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакана.

ПЕРВОМАЙСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

1. Иван Антонович **Антонова**—райсовет исполкомĕн председателĕн заместительне.
2. Александр Антонович **Бороткина**— «Путь к социализму» колхозри ветеринари фельдшерне.
3. Дмитрий Сергеевич **Долгова**—Буденный ячĕпе тăракан колхоз бригадирне.
4. Екатерина Михайловна **Зверьховскаяна**—Турхан больницинчи врача.
5. Петр Васильевич **Иванова** — «Трудовик» колхоз председательне.
6. Павел Петрович **Корнилова**—комбайнера.
7. Илья Васильевич **Макарова**—Первомайски крахмал завочĕн директорне.
8. Алексей Вадимович **Сидорова** — Анат Тăрмăш ял Совет председательне.
9. Анна Егоровна **Федоровăна**—Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.
10. Иван Иванович **Филиппова**—МТС-ри тракториста.

ПĂРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Наталия Петровна **Бусыгинăна**— «Серп и Молот» колхозри фермăсен заведующине.
2. Ольга Леонидовна **Доброславинăна**— Пăрачкаври вăтам шкулти учительницăна.
3. Евдокия Дмитриевна **Долговăна** — «VI Съезд Советов» колхозри ĕне сăвакана.
4. Андриан Васильевич **Князева**— МТС-ри тракториста.
5. Зинаида Ивановна **Кульковăна**— Долгополянăри завод станочницине.

Малалли пулать.



Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикă ри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

85. **«Первое мая» колхоз** (председателĕ **И. П. Прокопьев** юлташ, ферма заведующийĕ **И. А. Артемьев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 102 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 116 процент, сыснасем енĕпе 180 процент, сурăхсем енĕпе 164 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай парса татнă.

86. **Жданов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. В. Петриков** юлташ, ферма заведующийĕ **А. И. Ильина** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 120 процент, сыснасем енĕпе 157 процент, сурăхсем енĕпе 161 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 196 процент, сĕт 80 процент, çăмарта 75 процент панă.

87. **Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **П. Е. Егоров** юлташ, ферма заведующийĕ **Ф. Р. Романова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 103 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 122 процент, сыснасем енĕпе 170 процент, сурăхсем енĕпе 160 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 112 процент, çăмарта 104 процент панă.

88. **ВЛКСМ IX-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **М. П. Петров** юлташ, ферма заведующийĕ **П. Е. Егоров** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 101 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 120 процент, сыснасем енĕпе 170 процент, сурăхсем енĕпе 150 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 180 процент, сĕт 78 процент, çăмарта 127 процент панă.

89. **«Труд» колхоз (председателĕ П. Ф. Быков** юлташ, ферма заведующийĕ **В. В. Васильева** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 105 процент, мăйракаллă шултăра выльăх енĕпе 125 процент, сыснасем енĕпе 150 процент, сурăхсем енĕпе 134 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 180 процент, сĕт 60 процент, çăмарта 130 процент панă.

Колхоз хире тухма хатĕр

ЕЛЧĔК. Лаш Таппари Крупская ячĕпе тăракан колхоз тырпул пухса кĕме тимлĕн хатĕрленет. Колхозăн 6 жнейка, 2 лобогрейка тата 3 молотилка пур, вĕсене пурне те юсанă. Çак машинăсене юсас ĕçре тимĕрçĕ Николай Князев тăрăшса ĕçлерĕ.

Колхозăн тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ пур. Кунти колхозниксем кашниех тырпул пухса кĕртес ĕçре ăçта ĕçлемеллине лайăх пĕлеççĕ. Машиноведсем халĕ тимĕрçĕпе пĕрле хăйсен жнейкисене юсаççĕ. Çамрăк машинистсем А. Павловпа В. Александров юлташсем хăйсен жнейкисене лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем жнейкăна кӳлмелли лашасене конюхсем мĕнле пăхнине те тĕрĕслесех тăраççĕ.

Кунта çурласене йăлтах шăллаттарнă, çавасем валли 50 кĕрепле çĕнĕрен хатĕрленĕ. Çавасене пĕтĕмпех туптаса хунă. Тырпул турттарма колхозăн 300 михĕ пур. Транспорт инвентарĕсем те çителĕклĕ. Пурĕ 47 урапа, 35 рыдван хатĕрленĕ, ут таврашсем çителĕклĕ.

М. ЕГОРОВ.

Тырпул пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленмелле

Сĕнтĕр районĕнчи чылай колхозсем тырпул пухса кĕртме хатĕрленсе çитрĕç. Малтанхи хут тĕрĕсленĕ чухне «Новый путь», «Колос», «Красный Октябрь», Çĕнĕ Юнкăри Киров ячĕпе тăракан колхозсем тырпул пухса кĕме пур енчен те хатĕрри палăрчĕ. Çак колхозсенче çум çумлас, çĕртме тăвас ĕçсене те пысăк пахалăхпа ирттернĕ, утă çулас тата государствăна утă парас ĕçе те ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах та тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне районĕпе 50 молотилкăна яхăн юсаса пĕтермен. Уйрăмах «Большевик», «Первое мая», «Коммунар», «Осоавиахим», «Краснофлотец» колхозсем çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Кунта витнĕ итемсем юсама тытăнман, авăнсемпе зерносушилкăсене юсамаççĕ, михĕсем, шăналăксем çителĕксĕр. Пушкин ячĕпе тăракан колхозра вара ут таврашсемпе урапасем те юсавсăр.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление колхозниксене ăнлантарса пама колхозсене партипе совет активне тата ялхуçалăх специалисчĕсене ятăмăр. Вĕсем Вăрнар районĕнчи колхоз председателĕсем, МТС-па хатĕрлев организацийĕсен работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем чĕнсе каланине те колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Колхозсенче халĕ тырпул пухса кĕртес ĕçсен планĕсене тăваççĕ тата тырпул пухса кĕме хатĕррине иккĕмĕш хут тĕрĕслеççĕ. Ку тĕлĕшпе районра 19 комисси ĕçлет.

Уйра лайăх тырпул çитĕнет. Тырă вырма тухас вăхăт çывăх. Кашни колхозрах чи лайăх тырăллă вырăнсене вăрлăх участокĕсем тăвас шутпа тĕрĕслеççĕ, вĕсене юпасем лартса паллă тăваççĕ. Вăрлăх участокĕнчи тырра уйрăм пухса çапма кашни колхозрах хатĕрленеççĕ.

Н. ДАНИЛОВА,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Машинăсем тутăхса кайнă, вĕсене юсамаççĕ

МУРКАШ. **(Телефонпа).** Районри чылай колхозсем тырпул пухса кĕме лайăх хатĕрленеççĕ. Çак кунсенче тĕрĕсленĕ тăрăх, «Крестьянин», «Восток», «Красное Сормово» колхозсем тата Маленков, Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем тырпул пухса кĕме пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ. Çак колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление сӳтсе-явнă, вĕсем конкретлă обязательствăсем йышăнаççĕ, тырпула пĕр тăкаксăр тата кĕске вăхăтра пухса кĕме, государствăна тырпул вăхăтра парса татма пулаççĕ.

Анчах та, районĕпе илсен, тырпул пухса кĕме хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Районри колхозсем 90 жнейка, 120 молотилка, 16 трнер, 109 сортировка юсамалла. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне 80 жнейка, 96 молотилка, 12 трнер, 62 сортировка кăна юсанă.

Уйрăмах «Тнуши» колхоз начар хатĕрленет. Колхозăн 2 жнейка, пĕр молотилка пур. Вĕсем йăлтах тутăхса кайнă. «Знамя труда» колхозра 3 жнейка, 4 молотилка юсаман. «Труд» колхозăн 4 молотилка, 2 лобогрейка пур. Вĕсене пĕрне те юсаман. Çак колхозсенче çурласене те шăллаттарман.

Ф. МАЛЫШКИН.

ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

ЧКАЛОВСКОЕ. **(Телефонпа).** Халĕ кашни колхозрах утă çулаççĕ. Кăçал пирĕн пурĕ 1025 гектар утă çулса пухмалла, ку таранччен 775 гектар çулса пухнă. «Звезда», «Канаш», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем утă çулса пĕтереççĕ.

Колхозсенче силос хывас ĕç те анлăн пырать. Районĕпе 2315 тонна силос хывса плана 50 процент ытла тултарнă. Уйрăмăнах «Звезда» колхоз 85 тонна, «РОКК» колхоз 100 тонна хывнă. «Ырлăх», «Путь Ленина», Киров тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче те силос хывас ĕç ăнăçлă пырать.

Чылай колхозсем кăçал вĕлтĕрен, армути тата ытти курăксем пухса хатĕрлеççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз 25 центнер вĕлтĕрен, 50 центнер армути, «Канаш» колхоз 20 центнер армути, 20 центнер вĕлтĕрен пухса типĕтсе хунă. Чкалов тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче те вĕлтĕрепе армути пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вăрман çывăхĕнчи колхозсем выльăх валли йывăç турачĕ хатĕрлеççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 25 лав, «Первомайск» колхоз 32 лав, «Красное Батырево» 12 лав, «Алга» колхоз 30 лав йывăç турачĕ хатĕрленĕ.

Ю. ФЕДОРОВА,
Райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникĕ.

Ĕçре çамрăксен сывлăхне сыхласси

Совет Союзĕн ĕç пирки кăларнă законĕсем ĕçре çамрăк рабочисен сывлăхне тимлĕн сыхласа тăраççĕ. Тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, уйрăм вырăнсенче çав законсене пăснине палăртнă. Хăшпĕр предприятисенче çамрăксене ĕç вăхăчĕ пĕтнĕ хыççăн хăварса ĕçлеттереççĕ, вĕсене законпа пăхнă отпуска памаççĕ тата ытти те.

ССР Союзĕн прокурорĕ юстицин действительнăй государство советникĕ К. А. Горшенин юлташ союзлă тата автономилле республикăсен, крайсен, облаçсен, хуласемпе районсен прокурорĕсене, çавăн пекех чугун çулпа шыв транспорчĕ çинчи çар прокурорĕсене ĕçре çамрăксен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе кăларнă законсем епле пурнăçа кĕрсе пынине çирĕп пăхса тăма хушнă.

Пур прокурорсене те профсоюз организацийĕсемпе тата ĕçре сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен инспекторсемпе яланах çыхăну тытма хушнă. Вĕсем калана тăрăх, закона пăснă фактсене çийĕнчех тĕрĕслемелле, кирлĕ пулсан айăплисене çирĕп ответ тыттармалла.

Предприятисенчи должноçри çынсене, вĕсем çамрăк рабочисен йăла условийĕсене лайăхлатасси çине бюрократла пăхаççĕ пулсан, вĕсене ответ тыттармалла, кирлĕ пулсан суд умне тăратмалла.

(ТАСС).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

РЕСПУБЛИКĂРИ ПРОМЫСЛА КОМБИНАЧĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИЮНЬ УЙĂХĔНЧИ ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, районсемпе хуласенчи промысла комбиначĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Пăрачкав районĕнчи промкомбинат (управляющийĕ **Серапионов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Смыков** юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 107,3 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 112,1 процент тултарнă, продукци туса кăларассине, май уйăхĕнчипе танлаштарсан, 64 процент чухлĕ ӳстернĕ. Пăрачкав районĕнчи промкомбината 10.000 тенкĕ премии пама йышăннă.

Çĕрпӳ районĕнчи промкомбинат (управляющийĕ **Гаврилов** юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ **Хабаров** юлташ) мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 118,3 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 142 процент тултарнă, продукци туса кăларассине, май уйăхĕнчипе танлаштарсан, 16 процент чухлĕ ӳстернĕ. Çĕрпӳ районĕнчи промкомбината 5.000 тенкĕ премии памалла тунă.

Июнь уйăхĕнче Шупашкар хулинчи, Шăхасан, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски тата Канаш районĕсенчи промкомбинатсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Улатăр хулинчи, Йĕпрес, Хĕрлĕ Чутай тата Советски районсенчи промкомбинатсем июнь уйăхĕнче начар ĕçленĕ.

Иртнĕ уйăхри ĕçсемпе республикăри пĕр промкомбинат та Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулман.

Шупашкар пристанĕ июль уйăхĕнчи плана тултарнă

Шупашкар пристанĕн коллективĕ Аслă Октябрӳ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура пысăк çитĕнӳ тунă: июль уйăхĕнчи ĕçсен планне июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне пассажирсемпе груссем турттарас енĕпе 145 процент, тонно-километр енĕпе 361 процент тултарнă.

Пристань коллективĕ, тунă çитĕнĕве çирĕплетсе хăварса, малашне татах та лайăхрах ĕçлессишĕн кĕрешет.

Пурне те пуçламĕш шкулта обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен

(Закон йышăннăранпа 15 çул тултарнă тĕле)

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви Октябрьти социализмлă аслă революцин малтанхи кунĕсенчен пуçласах халăха сутта кăларас ĕçе çав тери пысăк вырăна хунă, хураççĕ те.

Ленин темиçе хутчен те çакна кăтартса панă: 'этемлĕх пухса хатĕрленĕ культурăн мĕнпур пуянлăхĕсене вĕренсе çитмесĕр социализм тума çук. Патша вăхăтĕнче кая юлнă Российăна улăштарса çĕнетес ĕçе тумашкăн хут пĕлекен, пĕтĕмĕшлĕ тата техникăллă пĕлӳсемпе хĕçпăшалланнă çынсем, историллĕ çав задачăна кĕске вăхăтрах пурнăçа кĕртме пултараканскерсем, кирлĕ пулнă. 1919 çултах Владимир Ильич хут пĕлменлĕхе пĕтересси çинчен кăларнă декрета алă пуснă. Çав декрет тăрăх, республикăри 8 çултан пуçласа 50 çула çитиччен пур çынсем те, вĕсем вулама-çырма пĕлмесçĕ пулсан, тăван чĕлхепе е вырăс чĕлхипе хут вĕренмелле пулнă.

Анчах пирĕн çĕршыва йĕри-тавра тăшман хупăрласа илни, граждан вăрçи тата 1921 çулхи выçлăх çав закона пурнăçа кĕртме чăрмантарнă. Çĕршыв интервенцие аркатса тăксан тата вăрçă хыççăн юлнă юхăнчăка пĕтерсе хуçалăха пысăк хăвăртлăхсемпе юсама тытăнсан, Ленин хăйĕн «Дневникри страницăсем» ятлă произведенийĕнче патша Российĕнчен юлнă йывăр тĕттĕмлĕхе пĕтерме кирли çинчен çĕнĕрен асăрхаттарнă. Ĕлĕкхи Российăра кашни пин çын пуçне 53 вĕренекен тивнĕ, çав вăхăтрах Англире 189 вĕренекен, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 206 вĕренекен тивнĕ.

Пирĕн çĕршывра халăх хуçалăхне юсаса йĕркелес тĕлĕшпе пысăк ĕç пуçлансан, анлă массăсем культурăпа техника тĕлĕшĕнчен кая юлни тата пирĕн промышленноçпа ялхуçалăхĕ валли кадрсем çителĕксĕр пулни çав тери çивĕччĕн палăрчĕ. Çавăнпа та Сталин юлташ 1925 çулта Свердлов ячĕпе тăракан университетри студентсем панă ыйту çине ответлесе çапла каланă: тĕп çулйĕр халĕ «...пĕтĕм çĕршывĕпех, пĕтĕм Совет Союзĕпех малтанлăха обязательнăй йĕркепе хут вĕрентме кирлĕ условисене хатĕрлесси пулса тăрать. Çакă ĕнтĕ, юлташсем, питĕ пысăк реформа. Ăна пурнăçа кĕртни культура фронтĕнче кăна мар, çавăн пекех тата политикăпа хуçалăх фрончĕсенче те питĕ пысăк çитĕнӳсем туни пулать. Çак реформа вăл çĕршыва малалла вăйлăн çĕклентермелли база пулса тăмалла. Анчах та çав ĕç çĕршер миллион тенкĕ тăрĕ. Çакна кăтартса парсан та çитет: ăна пурнăçа кĕртмешкĕн чăнчăн çар, çур миллиона яхăн учительсемпе учительницăсем кирлĕ. Анчах та пирĕн, кирек епле пулсан та, эпир хамăрăн çĕршыва культураллăхăн çӳлти пусăмне чăннипех çĕклес тетпĕр пулсан, çав реформăна çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртмелле. Ăна эпир тăватпăрах, юлташсем. Кун пирки нимĕн иккеленмелли те çук».

Обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси чи кирлĕ ĕç пулса тăчĕ. Партин XVI-мĕш съезчĕ çĕршывра культура строительствин хăвăртлăхне вăйлатма кирлине кăтартса хăварчĕ, пурне те обязательнăй йĕркепе пуçламĕш шкулта хут вĕрентесси тата хут пĕлменлĕхе пĕтересси боевой задача пулса тăнине кăтартса пачĕ. Съездра тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «Тĕп задача халĕ пурне те обязательнăй йĕркепе пуçламĕш шкулта вĕрентме тытăнасси пулать. Çав ĕçе тытăнни культура революцийĕ ĕçĕнче татăклă утăм тунине пĕлтернĕ пирки эпĕ ăна «тĕп» задача тесе калатăп. Çав ĕçе тытăнмалли вăхăт тахçанах çитнĕ, мĕншĕн тесен пирĕн халĕ пурне те обязательнăй йĕркепе пуçламĕш шкулта хут вĕрентессине организацилемелли условисем ССР Союзĕн нумай районĕсенче пур».

Партин Центральнăй Комитечĕ, ВКП(б) XVI-мĕш съезчĕн директивине пурнăçа кĕртсе пырса, 1930 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентесси çинчен постановлени йышăннă.

СССР Центральнăй Исполнительнăй Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çав çулах августăн 14-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, 8—9—10 çулти ачасене 1930—31-мĕш вĕренӳ çулĕнче 11 çултисене 1931—32-мĕш вĕренӳ çулĕнче пур çĕрте те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентме тытăнмалла пулнă. Вĕренĕвĕн хăвăртлатнă формисемпе усă курса, икĕ çул тата пĕр çул хушши вĕренмелли шкулсемпе курссенче 11—15 çулти çамрăксене, пуçламĕш шкулта вĕренменскерсене, обязательнăй йĕркепе вĕрентме палăртнă. Çапла ĕнтĕ 8 çултан пуçласа 15 çула çитнĕ çамрăксем пурте хут вĕренмелле пулнă.

Социализм строительствинче тунă çитĕнӳсем пурне те обязательнăй йĕркепе тăватă çул вĕрентес ыйтăва лартма çеç мар, çакăнпа пĕрлех 1931-мĕш вĕренӳ çулĕнче хуласенче, фабрикăсемпе заводсен районĕсенче тата рабочи поселоксенче пурне те обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентес ĕçе тытăнма май пачĕç. Пурне те обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентес ĕçе ытти вырăнсенче те, чи малтан талккишпех коллективизаци тунă районсенче тытăнма май килчĕ.

Шкул çурчĕсене, хăйсен тӳрĕ тĕллевĕпе усă курманскерсене, пушатса шкулсен аллине панă. Учительсем хатĕрлес тĕлĕшпе педагогика курсĕсем уçнă. Комсомолăн Центральнăй Комитечĕ шкулсенче ĕçлеме тата педагогика шкулĕсенче вĕренме мобилизаци йĕркипе виçĕ çул хушшинче çулсерен çирĕмшер пин комсомолец ярса тăчĕ. Вĕренекенсене—рабочисен, батраксемпе чухăнсен ачисене пулăшу парасси чылай вăйлăланчĕ. Вĕсене вĕренмелли хатĕрсем, урана тăхăнмаллисем, кĕпе-тумтир, апат-çимĕç тата ытти те тӳлевсĕр парассине организациленĕ. Хуласемпе ял Совечĕсем çумĕнче пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентес ĕçе пулăшма уйрăм комитетсем тунă.

Партипе совет правительстви тата общественность тунă пысăк ĕçе пула пирĕн çĕршывра пурне те обязательнăй йĕркепе пуçламĕш шкулта вĕрентессине пурнăçа кĕртнĕ. Вĕренекенсен хисепĕ калама çук хăвăрт ӳссе пынă. Хальхи РСФСР йышăнса тăракан территори çинче 1914 çулта мĕнпур шкулсенче 5.551.600 ача вĕреннĕ, 1928—29 çулта —7.859.600 ача, 1929—30 çулта — 8.712.900 ача, 1930—31 çулта вара— 11.263.900 ача вĕреннĕ. 1932—33 çулта РСФСР-ти шкулсенче 13.342.200 ача, вăл шутра 5—10-мĕш классенче 2.162.500 ача вĕреннĕ. 1914 çулта 5—10-мĕш классемпе танлашакан классенче тата курссенче 436.400 ача çеç вĕреннĕ пулнă. 1939 çулта РСФСР-ăн шкулĕсенче 20.408.800 ача вĕреннĕ. Миллионшар ачана вĕрентмешкĕн учительсен питĕ пысăк çарĕ кирлĕ пулнă, вĕсен хисепĕ 650.000 çынна çитнĕ.

Халăха çутта кăларас ĕçе паракан укçа-тенкĕ хисепĕ те ӳсрĕ. Патша Российĕнче халăха çутта кăларас ĕç валли пĕр çын пуçне çулталăкне 80 пус тăкакланă. Совет Союзĕнче 1928—29-мĕш вĕренӳ çулĕнче халăха çутта кăларас ĕçе 1.116,8 миллион тенкĕ панă, 1938 çулта ку тăкаксем 19.095,4 миллион тенке çити, е кашни çын пуçне 113 тенке çити ӳснĕ. Шкул ĕçне аталантарас тĕлĕшпе автономиллĕ тата союзлă республикăсем пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Партин XVIII-мĕш съезчĕ тата пысăкрах задача—хуласенче пурне те вăтам шкулта вĕрентес, ялсенче тата национальлĕ пур республикăсенче те, 10 çул вĕрентес ĕçе сарса пырса, пурне те çичĕ çул вĕрентессине татăкланах пурнăçа кĕртес задача кăларса тăратрĕ. Ку ĕçе шкулсем вăрçă умĕн пурнăçа кĕртме тытăннăччĕ. Пирĕн çĕршывра шкулсен йышĕ çав тери хăвăрттăн ӳссе пынипе пĕрлех, вĕсем хăйсен ĕçне те урăхлатса çĕнетсе пычĕç. Совет шкулĕ хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕпче малта пыракан çынсемпе педагогсен лайăх шухăшĕсене йышăнса, ĕçĕн чи лайăх формисемпе меточĕсене шыраса, питĕ пысăк та кăткăс çула утса тухрĕ. Совет государстви ĕлĕкхи шкул ĕçне тĕпренех улăштарчĕ, çĕнĕ çынна—культураллă, пĕлӳлĕхлĕ, тĕрлĕ тĕпмĕшлĕхсенчен ирĕклĕ çынна, этемлĕхе юратакан, пур халăхсемпе те туслă пурăнакан тата вĕсене юратакан, ĕçе юратакан çынна, хамăрăн Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăракан çынна вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе пысăк улшăнусем турĕ.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче совет шкулĕ хăйĕн ĕçне чарса лартмарĕ, вĕренӳ пахалăхне тата çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе малалла аталантарас тĕлĕшпе çĕнĕ утăмсем турĕ. Çав вăхăтрах ытти çĕршывсенче шкулсен хисепĕ те, вĕсен пахалăхĕ те чакса пычĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах пирĕн çĕршывра пур çĕрте те ачасене çичĕ çултан пуçласа обязательнăй йĕркепе хут вĕрентессине пурнăçа кĕртсе пычĕç. 1944—45 вĕренӳ çулĕнче çичĕ çулхи ачасене икĕ миллион çынна яхăн шкула илнĕ. Вĕренме илнĕ çичĕ çулхи ачасемшĕн пирĕн уйрăмах тимлĕн тăрăшаççĕ. Вĕсене чи лайăх учительсем вĕрентеççĕ, вĕсем валли хăйсен пӳ-сине килĕшӳллĕ партăсем туса панă, вĕсене вĕри апат çитереççĕ тата ыт. те. 1943 çултан пуçласа пысăк хуласенче çичĕ çул вĕренмелли шкулсемпе вăтам шкулсенче арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăм вĕрентме тытăннă. Çак мероприяти ĕнтĕ вĕренекенсене çар ĕçĕпе сывлăх тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерсе хатĕрлессине лайăхлатма, шкулти дисциплинăна çирĕплетме май пачĕ. Шкул ачисен вĕренӳри ĕçченлĕхне хăпартрĕ. «Вĕренекенсем валли правилăсем» туни те шкулсенче дисциплинăна çирĕплетме май пачĕ.

1944—45 вĕренӳ çулĕнчен пуçласа пирĕн шкулсенче çитĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат илмелли экзаменсем парас йĕркене пурнăçа кĕртме тытăннă. Çав паха мероприяти учительсемпе вĕренекенсен ĕçри ответлăхне ӳстерме май пачĕ, шкулсене вĕренӳ пахалăхĕ енчен малалла аталантармалли никĕсе хыврĕ. Пирĕн çĕршывра наукăпа педагогика центрне—Педагогика наукин академине тунă. Çав академи, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе пĕрле, лайăх учительсен опытне вĕренсе пырса, шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлет, шкулсен программине лайăхлатас тата вĕренмелли лайăх кĕнекесем çырас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕçсем тăвать.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче совет шкулĕ общественнăллă ĕçе те активлăн хутшăнчĕ. Çакă ĕнтĕ учительсемпе вĕренекенсен хĕрӳллĕ патриотизмне кăтартса пани пулчĕ. 1944 çулта тырпула пăхса çитĕнтерес тата ăна пухса кĕртес ĕçе 4 миллиона яхăн шкул ачи тата 100 пин ытла учитель хутшăнса ĕçленĕ. Вĕсем 155 миллион ĕçкунĕ тунă. РСФСР-ти шкул ачисем питĕ нумай кăмпа, çырла тата эмел тумалли курăксем, çĕршер пин тонна тимĕр-тăмăр, танксем, самолетсемпе тупăсем тума миллионшар тенкĕ укçа, çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли темĕн чухлĕ парне пухнă.

Пирĕн совет шкулĕнчен вĕренсе тухнă нумай çамрăксем ĕмĕр-ĕмĕр мухтава кĕрсе юлчĕç. Вĕсенчен нумайĕшне паттăрлăхшăн, хастарлăхшăн тата хăюлăхшăн правительство Совет Союзĕн Геройĕ ятне пачĕ тата орденсемпе медальсем парса наградăларĕ. Зоя Космодемьянская, Лиза Чайкина, Саша Чекалин, Краснодон геройĕсемпе ытти нумайĕшĕсен ячĕсем ĕмĕр-ĕмĕр асран каймĕç.

Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, çĕршыв мирлĕ строительство тапхăрне кĕчĕ.

Мирлĕ вăхăт условийĕсенче пирĕн совет шкулĕн вĕренӳ пахалăхне тата воспитани ĕçне малалла лайăхлатса ӳстерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Нимĕç йытă-кĕтĕвĕсем аркатса хăварнă шкулсене пурне те çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне юсаса çитермелле, вăхăтра вутă хатĕрлесе хумалла, шкулти партăсене, сĕтел-пукан таврашне йĕркелемелле, шкул ачисене вĕрентес тата воспитани парас ĕçе ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма пур условисене те туса памалла. Пĕр ача та шкул тулашĕнче ан юлтăр тесе тăрăшасси пирĕн кашнин тивĕçĕ пулса тăрать.

Н. ПАРФЕНОВА,
РСФСР Наркомпрос коллегийĕн членĕ.

Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетне туса хунăранпа çулталăк тултарнине уявлани

ВАРШАВА, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пĕтĕм Польша халăхĕ Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетне туса хунăранпа пĕр çул тултарнине уявланă. Польша Халăх Совечĕн ларăвĕсем иртекен çурт умĕнче Варшава хулинче пурăнакансен нумай пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ. Митингра Варшава хулин президенчĕ Толвинский, Польшăри демократиллĕ партисен представителĕсем, Лодзь хулин президенчĕ Миял, Пĕтĕм славянсен Комитечĕн председателĕ Гундоров генерал-лейтенант тата ыттисем те сăмахсем тухса каланă.

Поляксен пур хаçачĕсем те Польшăри политикăллă тăватă парти чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетне туса хуни поляк халăхĕшĕн историллĕ аслă ĕç пулса тăчĕ. Польша халăхĕн чăн-чăн демократиллĕ правительствине туса хурас çул çине тăчĕ, çав правительствăн идейисем Польша реакцийĕн идейисемпе шухăшĕсене тĕпренех хирĕç тăраççĕ. Пĕр çул каярах Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ кăларнă манифестăн программи хальхи вăхăтра пурнăçа кĕрсе пырать.

Пĕтĕм Польша—тенĕ чĕнсе каланинче, — хальхи вăхăтра нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке тухнă. Çакă вăл Польшăпа совет салтакĕсем пĕрле вăй хурса кĕрешнипе пула, Польша демократийĕ Совет Союзĕпе туслă пурăнас политикăна çирĕп тытса пынине пула пурнăçа кĕме пултарчĕ.

Чĕнсе каланинче малалла—çĕнĕрен чĕрĕлсе çĕкленекен Польшăн пĕтĕм территорийĕнче поляксен администрацийĕ ĕçлени çинчен, помещиксен çĕрне Польша хресченĕсене валеçсе пани çинчен, шултăра предприятисене национализациллени çинчен, 1939 çулхи Польша çарĕнчен нумай вăйлăрах та лайăхрах хĕçпăшалланнă Польша çарне туса хуни çинчен каланă. Çаксем пурте Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ тытса пыракан политикăран килнине уйрăмăнах палăртнă. Çав политикăна Вăхăтлăх Правительство тытса пынă, халĕ поляксен реакцийĕ Польшăра харкашу кăларса яма хăтланнине пăхмасăрăх, çав политикăна Польша Халăхĕн Пĕрлĕх Правительстви тытса пырать. Реакциллĕ элементсем харкашу кăларма хăтланни халăхпа правительство пĕрле ĕçлесе тăнине пула, путланса ларчĕ. Халăх кăмăлне пула Халăхăн Пĕрлĕх Правительстви çуралчĕ, хăйĕн ялавĕ таврара вăл Польша демократийĕн пур вăйĕсене те пуçтарса пĕтĕçтерчĕ. Поляксен эмиграцири Лондонри реакциллĕ ушкăнĕ путланса ларчĕ, поляксен фашистла реакцийĕн политикăллă çулйĕрĕ те яланлăхах намăс курса пĕтсе ларчĕ.

Польшăри демократиллĕ партисем пурте, тенĕ чĕнсе каланинче, Халăхăн Ирĕклĕх Комитечĕпе алла-аллăн тытăнса çĕнĕ государство туса хурассишĕн кĕрешсе пычĕç.

«Эпир, — тенĕ малалла чĕнсе каланинче,—хамăр пĕрле кĕрешсе илнĕ çĕнтерӳсемпе реакционерсене усă курма памăпăр. Фашизм яланлăхах путланса ларчĕ. Помещиксемпе карательсем урăх нихăçан та таврăнаймĕç, мĕншĕн тесен поляк демократийĕн лагерĕнче пĕрлешнĕ Польша халăхĕ çавна тума парас çук».

Петэна суд тума тытăннă

ПАРИЖ, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 23-мĕшĕнче Парижра Юстици двоpецĕнче Петэн сучĕ пуçланнă.

12 сехет те 30 минутра суд çуртне журналистсем, чĕннĕ çынсем (вĕсем йышлă мар) тата свидетельсем пухăнаççĕ. Свидетельсем хушшинче президент пулнă Альбер Леврен, Луи, Марэн, Шарль Ру, Поль Рейно, Мишель Клемансо, аббат Родэйн, пастор Бегнер, Леон Ноэль, генерал Жорж, генерал Бессон, кардинал Лиенар, принц Бурбон Пармский, генерал Жюэн, генерал Вейган, генерал Бержере, Пейрутон, адмирал Блео, генерал Серинье тата ыттисем те пур.

13 сехет те 10 минутра суд залне Петэн кĕрет, вăл чĕтрекен аллисемпе пĕр çыхă хут тытнă. Унпа юнашар хĕçпăшаллă хурал, хыçĕнче виçĕ адвокат — Пайен, Изорни тата Лемэр. Петэн кĕнĕ чухне свидетельсем ӳпкелешсе каласма тытăнни илтĕнет.

13 сехет те 15 минутра суд залне суд председателĕ, прокурор тата верховнăй суд членĕсем кĕреççĕ. Парламент янă заседательсем суд председателĕнчен сылтăм енне, хирĕç тăракан юхăм янă заседательсем сулахай енне лараççĕ.

Суд айăпланакан Петэнран вăл кам пулнине ыйтса пĕлнĕ хыççăн, адвокат Пайен ура çине тăрать те хӳтĕлекенсен заявленине вуласа парать. Заявленире—верховнăй суд Петэна суд тума пултараймасть, мĕншĕн тесен 1875 çулхи конституци тăрăх ăна пĕр сенат кăна суд тума пултарать, тенĕ. Суд хӳтĕлекенсен заявленине пăхса тухма тăхтав тăвать.

Тăхтав хыççăн суд çапла пĕлтерет: хӳтĕлекенсен заявленийĕ çак суд Петэна суд тума ирĕклĕ мар тенине суд йышăнмасть. Кун хыççăн 30 минут хушши айăпласа çырнине вулаççĕ, унтан свидетельсенчен вĕсем камсем пулнине ыйтса пĕлеççĕ, вара свидетельсем суд залĕнчен тухаççĕ. Кун хыççăн Петэн заявлени тăвать. Вăл хăйĕн заявленийĕнче ку суд ăна суд тума ирĕклĕ марри çинчен калать, суд ыйтнисене хирĕç вăл пĕр ответ та пама килĕшменни çинчен пĕлтерет. Хăй Германипе тунă килĕшӳве тӳрре кăларма тăрăшса, Петэн ăна çаплах хакласа каланă: çав килĕшӳ—«Франци çăлса хăварнă акт» пулса тăчĕ, тенĕ.

Петэн суд ыйтнине хирĕç ответ пама килĕшменни çинчен пĕлтернĕ хыççăн, суд председателĕ свидетельсенчен ыйтса пĕлме тытăнать. Чи малтан Поль Рейноран ыйтма пуçлать. Поль Рейно каланă тăрăх, вăл кăтартса парас тени виçĕ пая пайланать. Пĕрремĕш пайĕнче вăл хăй мĕн пирки Петэна хăйĕн правительствине кĕртни çинчен ăнлантарса пама тивĕçлĕ, иккĕмĕш пайĕнче—мĕн пирки нимĕçсемпе килĕшӳ тума тивни çинчен калама, виççĕмĕш пайĕнче—государство хăрушсăрлăхне хирĕç тунă каварлашăва Петэн хутшăннине çирĕплетекен фактсене кăтартса пама тивĕçлĕ.

18 сехетре суд ларăвĕ хупăнать. Çитес лару июлĕн 24-мĕшĕнче пулать.

ПАРИЖ, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Петэна суд тăвакан судăн заседателĕсенчен Петэна хӳтĕлекен адвокатсем çаксене сирсе янă: ассамблея ушкăнĕсемпе хирĕç тăракан организацисем суйласа янă Монмуссопа Демюсуа коммунистсене «Либерасьон Сюд» организацийĕн представительне Люси Обрака, республика федерацийĕн представительне Робер Пьемента. Франци законĕсем тăрăх, кирек хăш суд валли те заседательсем уйăрнă чухне, хӳтĕлекенсем ыйтнипе, айăпланакансем заседательсен шутĕнчен çуррине таран сирсе яма пултараççĕ.

Греци влаçĕсем сутăнчăксене наказани парассинчен хăтараççĕ

АФИНЫ, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Германи оккупанчĕсемпе пĕрлешсе ĕçленĕ çынсем çинчен жалобăсем памалли влаçсем тунă вăхăт июлĕн 21-мĕшĕнче иртсе кайнă. Нимĕçсемпе пĕрле ĕçленĕ çынсемпе сутăнчăксем, вĕсем пирки айăплакан материалсем ятарласа тунă комиссие июлĕн 21-мĕшĕччен паман пулсан, кирек епле преступлени тунă пулин те, вĕсем хăйне евĕр амнисти илнĕ. Çапла вара Грецире сутăнчăксене наказани парасси халлĕхе квислингла правительствăсен хăшпĕр министрĕсене суд тунипех чарăнса ларнă. Çав министрсем валли тĕрмесенче уйрăм режим туса пани çинчен пĕлтереççĕ: вĕсен мĕн кирли пурте пур, вăл шутра хăйсен лакейĕсем те пур, вĕсем йышăнусемпе банкетсем те тума пултараççĕ иккен.

Сулахайра тăракан хаçатсем фашистла майлă çынсене айăпламалли срока кĕскетнине хыттăн сивлеççĕ. Нумай сутăнчăксене ку таранччен тăрă шыв çине кăлармасăр хăварнă, мĕншĕн тесен, оккупантсем вăхăтĕнчи пекех, хăшпĕр çынсем халĕ те çав вырăнсенчех ĕçленĕ пирки, халăх вĕсем çинчен çырса пĕлтерме хăраса тăрать.

Çурçĕр Ирландире пулса иртнĕ демонстрацисем

ЛОНДОН, июлĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Ирландири Бельфаст хулинче июлĕн 20-мĕшĕнче авиаци завочĕсенче ĕçлекенсенчен 3.000 рабочи парламент çуртĕ патне пынă. Демонстрацири халăх рабочисене пурне те производствăра ĕç памалли политикăпа пурнăçа кĕртме ыйтнă. Демонстраци пуçĕнче пынă рабочисем пысăк плакатсем çĕклесе пынă. Плакатсем çинче çакăн пек лозунгсем пулнă: «Эпир рабочисене пурне те производствăра ĕç тупса пама ыйтатпăр!».

Бельги сеначĕ Ван Акер тăратнă законопроекта йышăннă

БРЮССЕЛЬ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Депутатсен палати хыççăн Бельги сеначĕ ĕнер премьер-министр Ван Акер тăратнă законопроекта йышăннă. Вăл законопроект тăрăх, конституцин 82-мĕш статьине пурнăçа кĕртсе, король тепĕр хут хăйĕн вырăнне ларасси çак ыйтупа икĕ палата пĕрлешсе йышăннă хыççăн тин пулма пултарать. Законопроект майлă 77 сасă панă, ăна хирĕç 58 сасă пулнă, 5 çын сасăламан.

Чехословаки правительстви экономика тĕлĕшпе йышăнна мероприятисем

ПРАГА, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер йывăр промышленноçа национализацилес тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп комиссин пирвайхи ларăвĕ пулса иртнĕ. Промышленность министрĕ Лаушман çапла каланă: «Эпир пĕтĕм государствăна, республикăпа халăха кирлĕ пĕтĕм промышленноçа национализацилеме шутлатпăр. Чи малтан, рудăпа минералсем кăларса тăрас ĕçе, çĕр кăмрăк шахтисене, металлурги завочĕсене, тимĕр-тăмăр шăратакан тата хĕçпăшал завочĕсене, çавăн пекех тата хими промышленноçне национализацилетпĕр. Предприятисен пысăк пайне вĕсемшĕн нимĕçсене, мадьярсене, коллаборационистсене (нимĕçсемпе пĕрлешсе ĕçленĕ çынсене) укçа тӳлемесĕрех халăх аллине паратпăр», тенĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Австрали çарĕсем Борнео утравĕ çинче тата тепĕр тĕле, Баликпапан хулинчен 14 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан пункта, аннă, японецсем вĕсене хирĕç тăни пулман. Австрали çарĕсем аннă вырăнтан кăнтăр-хĕвелтухăçнелле малалла куснă.

Америка самолечĕсем Пескадор утравĕсен шутне кĕрекен Мако утравĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă. Тинĕс авиаци самолечĕсем Японин 9 суднине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ тата Индо-Китайри чугун çулсене атакăланă.

Çавăн пекех тата союзниксен авиацийĕ японецсен Борнео утравĕпе Пелебес утравĕ çинчи объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флот командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 18-мĕшĕнче американецсен 3-мĕш флочĕ тата Англи флочĕн карапĕсем японецсен 12 карапне шыва путарнă, 9 карапне сиенленĕ. Çав шута японецсен «Нагато» линкорĕ тата икĕ эсминецĕ кĕреççĕ.

Американецсемпе акăлчансен авианосецсем çинче вырнаçса тăракан самолечĕсем июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа Японин 412 суднине тата 556 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

КĔСКЕН

▲ Венгри сучĕ Венгрири фашистла çамрăксен «Левенте» ятлă организацийĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Белди Алайош генерал-полковника вĕлермелле приговор йышăннă.

▲ Бухарест университетĕнче вырăс чĕлхипе вырăс литературин кафедри уçăлать.

▲ Швеци металлисчĕсен союзĕн членĕсем — пурĕ 60 пин çын союзăн центральнăй руководствине ĕçрен тухма тата халех профсоюзсен конференцине пухма ыйтаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шкулсенчи экзаменсен хăшпĕр итогĕсем

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» постановлени йышăннăранпа çулталăк иртрĕ. Çак иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне пĕтĕмпех СССР Совнаркомĕн постановленине ăнăçлăн пурнăçлас майпа туса пынă. Çакна иртнĕ экзаменсем те лайăх кăтартса пачĕç. Учительсем çитĕнекен ăрăва тулли те çирĕп пĕлӳ парассишĕн тăрăшса ĕçлени курăнчĕ. Экзаменсем вĕренекенсен пĕлĕвĕсем ытти çулхисенчен çирĕппине, вĕсем наукăсен никĕсĕсене вĕренсе алла илес тĕлĕшпе халиччен хинчен тăрăшарах ĕçленине кăтартса пачĕç. Çапла вара пирĕн республикăри 760 çамрăк, 10-мĕш класран ăнăçлăн вĕренсе тухса, çитĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат илме тивĕçлĕ пулчĕç. Çак çамрăксем аслă шкулсене вĕренме кĕме пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Вуннăмĕш класран вĕренсе тухакансенчен уйрăмăнах чапа тухса ылттăн тата кĕмĕл медальсем илме тивĕçлĕ пулнă çамрăксем те пур. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1944 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче «Шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ М. Макаров юлташ çак вĕренекенсене ылттăн медальсем парса наградăламалла тунă: В. Улитинăна — Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчен, М. Фадеевăпа О. Андреевăна—Шупашкарти хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчен, Н. Макаровăна—Шупашкарти хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчен тата Т. Ударинăна—Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкултан.

Унсăр пуçне Рая Железковăна (Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчен), К. Рыжова (Шупашкарти арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчен), А. Корсуновăна (Улатăрти 7-мĕш номерлĕ вăтам шкултан) тата И. Токсинăна (Красноармейскри вăтам шкултан) кĕмĕл медальсем парса наградăламалла тунă. Çак вĕренекенсем, экзаменсене пур предметсемпе те «пятерка» паллăпа тытса, пысăк наградăсем илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Медаль илме тивĕçлĕ пулнисенчен нумайĕшĕ вĕренӳпе общественнăллă ĕçе пĕлсе çыхăнтарса пычĕç. Татьяна Ударина шкултан вĕренсе тухиччен комсомол организацин секретарĕ пулса ĕçлерĕ. Вăл ытти вĕренекенсем хушшинче ĕçе, вĕренĕве чунтан юратнипе, йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерме пĕлнипе тата тӳрĕ кăмăллă пулнипе палăрса тăрать. Татьяна Ударина 1943 çулта 8-мĕш класра вĕренекен ытти комсомолецсемпе пĕрле Сталинград хулине юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлерĕ.

Медаль илме тивĕçлĕ пулнă вĕренекенсем хăйсен сочиненийĕсенче Тăван çĕршыва, халăха чунтан юратни çинчен çыраççĕ. Шупашкарти хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче вĕреннĕ Нина Макарова шкулти стена хаçачĕн редколлеги членĕ, класри организатор пулса ĕçленĕ, художественнăллă пултарулăх кружокĕнче тăнă. Вăл ĕçре те, вĕренӳре те лайăх пример кăтартса пынă. Вырăс чĕлхипе çырнă сочиненире вăл: «Эпир, çамрăксем, Тăван çĕршыв хăватне татах та ӳстерессишĕн, ăна тĕнчери чи пуян та культураллă çĕршыв тăвассишĕн мĕнпур вăя, пĕлĕве, çамрăк хастарлăха парса ĕçлĕпĕр», тесе çырать.

Маргарита Фадеева сочиненире: «Тăван çĕршыв! Çак сăмахсем пирĕн паттăр воинсен чĕрисене шартлама сивĕ каçсенче те, хаяр çилтăмансенче те ăшăтса тăнă, тăшмана тата хытăрах çĕмĕрме вăй-хăват хушнă. Тăван çĕршыв! Çак сăмахсем тылри ĕççыннисене тата лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме хаваслантарнă. Ученăйсен пуçĕсене çĕнĕрен те çĕнĕ паха шухăшсем кĕртнĕ. Вăл сăмахсем домнăсемпе мартенсенчи хурçă-тимĕрсене хăвăртрах шăранма, поездсене тата хытăрах çӳреме пулăшнă. Вăл сăмахсем колхоз уйхирĕсенче вăйлă тырпул туса илме, ĕçлеме, вĕренме тата ĕмĕтленме çĕнĕ вăй парса хаваслантарнă», тесе çырать.

Çапла вара пирĕн шкулсем нумай пĕлекен, вĕреннĕ çамрăксем кăна мар, Тăван çĕршыва чунтан юратакан, ĕçлеме пултаракан хастар çамрăксем вĕрентсе кăлараççĕ.

Анчах экзаменсем пирĕн шкулсемпе учительсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене те кăтартса пачĕç. Нумай шкулсем СССР Совнаркомĕ «Шкулсенчи вĕрентӳ ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçлассишĕн тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. Вĕренекенсен пĕлĕвĕсем çителĕксĕр. Çавна пула кăçал çĕршер çамрăк вăтам шкултан вĕренсе тухаймарĕç. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче экзаменсенче пулнă çитменлĕхсене кашни шкул, учитель тĕплĕн шута илсе, вăл çитменлĕхсене çитес вĕренӳ çулĕнче пĕтерессишĕн тăрăшмалла.

Т. ЕФРЕМОВ,
Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн пуçламĕш тата вăтам шкулсен управлени начальникĕ.

ПАТĂРЬЕЛĔНЧИ, КАЛИНИНĂРИ, КАНАШРИ, ПĂРАЧКАВРИ, ÇĔРПӲРИ ТАТА ЕТĔРНЕРИ ПЕДАГОГИКА УЧИЛИЩИСЕМ 1-МĔШ КУРССЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕÇÇĔ

Педагогика училищисем пуçламĕш шкулсем валли учительсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ, Канашри педагогика училищи кунсăр пуçне тата дошкольнăй учрежденисем валли воспитательсем вĕрентсе хатĕрлет.

Педагогика училищисене 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Техникума вĕренме кĕрес текенсен çак предметсемпе экзамен памалла: вырăс чĕлхипе (сăмахпа каласа тата çырса), тăван чĕлхепе (сăмахпа каласа тата çырса), арифметикăпа (сăмахпа каласа тата çырса). 7-мĕш класран отлично вĕренсе тухнисене çав класран вĕренсе тухнă хыççăнхи икĕ çул хушшинче педагогика училищисене экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 11-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленисене педагогика училищин директорĕ ячĕпе ямалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) ăçта мĕнле çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар), 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) автобиографи, 4) виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, 5) Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла), 6) сывлăх çинчен калакан справка.

Педагогика училищине илмелли экзаменсем сентябрĕн 15-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Вĕренме илнисене столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Хваттер çуккисене общежитие вырнаçтараççĕ.

ЧАССР Наркомпросĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00179. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000